Психолог сĕнет

Шкул пурнăçне мĕнле хăнăхтармалла?

Ачана шкула пĕрремĕш хут янă чухне кашни ашшĕ-амăшех пăлханать. Пирĕн ача шкул пурнăçне мĕнлерех хăнăхĕ-ши? Ытти ачасемпе еплерех хутшăнусенче пулĕши? Çак ыйтусем канăç памаççĕ вĕсене.

Шкула çÿреме пуçлани ачасен пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнать. Психологи тата социаллă енĕсемпе те. Ачана çĕнĕ условисем, çĕнĕ ĕç-хĕл кĕтет. Унăн социаллă статусĕ те улшăнать. Çакăнпа пĕрлех çĕнĕ хутшăнусемпе çĕнĕ тивĕçсем пурнăçа кĕрсе вырнаçаççĕ. Пурнăçра вĕрентÿ процесĕн саккунĕсем малти вырăна тухаççĕ.

Шкула хăнăхасси вара тÿрех пулмасть. Ача лайăх хăнăхса çитиччен пĕр кун, пĕр эрне кăна иртмест. Çак адаптаци вăхăчĕ 6-7 çулхи ачасен 8 эрне таранах тăсăлма пултарать. Ача садне çÿременнисен ку вăхăт тата вăрăмрах. Ытти ачасемпе хутшăнман, çаврăнăçусăртараххисене те шкула хăнăхма йывăртарах.

Анчах хăнăху вăхăчĕ ытлашшипех тăсăлса кайсан, ача шкул пурнăçне йышăнаспăн пулмасть. Ку вара вĕренÿре пăтăрмахсем кăларса тăратать. Тин çеç шкула кайма пуçланă ачан лăпкăлăх туйăмĕ çухалать, хăйне те япăхрах туйма пуçлать. Çавăнпа та ача патне çемье енчен те, шкул енчен те пĕр пек требованисем пулмалла. Ачан пĕчĕк çитĕнĕвĕсене те тимлĕхсĕр хăвармалла мар, йывăрлăхсенче те, вĕсем пирĕншĕн йывăрлăх пек туйăнмаççĕ пулсан та, тÿрех пулăшу пама тăрăшмалла. Çапла вара шкула хăнăхасси вĕрентекенрен кăна мар (ашшĕ-амăшĕ ытларах чух шăпах çапла шутлать), çемьерен те нумай килет.

Ача шкула хăвăртрах хăнăхтăр тесен ăна валли кун йĕркине çирĕплетмелле. Килте шкула каякан ачан вĕренмелли кĕтес пулмалла, анчах та хусканулăх енĕпе те пуçарулăх кирлĕ. Паллах, шкулта та, килте те тĕрĕс апатланни çине пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ачана хăйĕн тивĕçĕсене ответлă пурнăçлама хăнăхтармалла. Вăл пĕр-пĕр ĕçе хăй тĕллĕн тунине ырламалла. Мĕн те пулин тĕрĕс мар тунишĕн вăрçмалла мар, кулмалла та мар. Ăна çак вăхăтра япалана е ĕçе мĕнлерех тумаллине кăтартмалла.

Енчен те ача вĕренÿре ĕлкĕрсе пыраймасть пулсан, уншăн ачана вăйпа та, ытти майпа та айăпламалла мар. Ачана хăйне, хăй пурнăçлана ĕçĕсене хак пама вĕрентмелле.

Шкула кайиччен вара хăвăрăн ачапа çак темăсем тавра калаçсан аван пулмалла: ют çын япалине туртса илмелле мар, хăвăнне те туртса илтермелле мар, анчах та кăмăллăн ыйтсан памалла; выляма чĕнсен каймалла, чĕнмеççĕ пулсан, пырса ыйтмалла; äçта тимлĕх кирлĕ – пур çĕрте те тимлĕ пулмалла; япăх паллăсем илсен макăрмалла мар; пур ĕçе те вăхăтра тумалла; никам çинчен те элеклемелле мар тата ытти те. Çак калаçусене ирттерни ачана питĕ пулăшать.

Çÿлерех илсе кăтартнă сĕнÿсене пурнăçласан тата хăвăр ачăра яланах тимлĕх уйăрсан, пĕрремĕш класа кайма пуçланă ача шкула çăмăллăнах хăнăхĕ.

Л. ВЕРХОВЦЕВА,
вĕрентÿ пайĕн диагностикăпа консультаци центрĕн психологĕ.

Врач канашĕ

Ерекен шăши чирĕ

Çулран çул пирĕн республикăра ГЛПС чирĕпе чирлекенсен шучĕ ÿссех пырать. Халăхра çак чире шăши чирĕ тесе каласçĕ. Пирĕн районта та чирлекенсен шучĕ ÿсет. 2007 çулта ГЛПСпа пĕр çын чирленĕ пулсан, 2008 çулта – 5 çын. Вĕсем пурте Муркашри тĕп больницăн терапи уйрăмĕнче сипленсе тухнă.

Мĕнле чир-ха вăл ГЛПС тени? Хăш енчен хăрушă? Çак ыйтусем нумай çынна иккĕлентереççĕ. ГЛПС чирĕпе чирлесен нерв системи сиенленет, пÿре япăх ĕçлет, гемораги пăнчисем ÿт çине тапса тухаççĕ.

Çут çанталăкра шăшисемпе йĕке хÿресем хушшинче чир анлă сарăлнă вырăнсем пур, уйрăмах вăрмансемпе уйсенче. Эпизоотисем теççĕ вĕсене. Çав вырăнсене ĕçлеме е канма кайсан, гигиена правилисене пăхăнма май пулмасан, ГЛПС чирĕпе чирлес хăрушлăх тухса тăрать. Шăшисемпе йĕке хÿресем вирус ерсенех сиенлĕ шутланаççĕ, чире йĕри-таврана сараççĕ (апат-çамĕç, шыв сиенленет, вĕсен каяшĕ урлă – сывлăш та). Çак вĕтĕ чĕр чунсем вырăнтан вырăна куçса çÿренипе чир анлăн сарăлать.

Шăши чирĕпе пурте чирлеме пултараççĕ – ача-пăчаран пуçласа ваттисем таранах. Чир çулталăкăн хăть те хăш тапхăрĕнче те ерме пултарать. Анчах çуркуннепе кĕркунне уйрăмах, шăшисемпе йĕке хÿресен активлăхĕ ÿснĕ вăхăтра. ГЛПС чирĕпе ытларах ял хуçалăх ĕçченĕсемпе вăрман ĕçлекенсем чирлеççĕ. Хăш-пĕр чух вара вăрмана çырла, кăмпа е мăйăр пуçтарма, дачăна ĕçлеме, вăрманта вырнаçнă санаторине канма кайсан та чире çаклатма пулать.

Чирлекенрен хăрама кирлĕ мар. Мĕншĕн тесен чир пĕр çынран теприне ермест. Пĕрре чирленĕ çын тепĕр хут çак чирпе чирлемест.

Чирĕн вăрттăн тапхăрĕ 9-35 кун пырать, вăтамран – 12 кун. Малтанах, чир пуçлансанах, шăнтса пăрахать, ÿт температури 39-40 градус таран хăпарать, пуç хытă ыратать, вăй пĕтет, äш пăтранать, пĕрмай хăстарать. Çак тапхăр 5-7 кун таран пырать, ÿт çине вĕтĕ-вĕтĕ пăнчăсем пек шатрасем тапса тухаççĕ. Чир пĕр пек килмест, хăш-пĕр чухне чир пÿрене çеç сиенлет: шăк сахал тухать, унăн виçи чакса каять, юнлă тухма пултарать е пачах тухма пăрахать. Чире вăраха ямалла мар, унсăрăн чĕре чирĕсем аталанаççĕ, пÿре ĕçлеме пăрахма пултарать. Диагноза чирлĕ çыннăн юнне лаборатори меслечĕпе тĕрĕслесе çирĕплетеççĕ.

Чирĕн малтанхи паллисем пуçлансанах чирлĕ çынна больницăна выртттармалла.

Вăрмана, уйсене ĕçлеме, кăмпана, дачăсене кайнă чух питĕ асăрхануллă пулмалла. Харпăр хăй гигиена правилисене çирĕп пăхăнса тăмалла. Таса мар апат-çимĕçе çимелле мар, шыв та пур çĕртен ĕçмелле мар. Кил-çурт таврашĕнче йĕке хÿресемпе шăшисене хунама памалла мар, дератизаци туса ирттермелле, вĕсен киле кĕрес çулĕсене пÿлмелле.

Г. СОКОЛОВА,
Муркашри тĕп больницăн врач-эпидемиологĕ.

Милици хроникинчен

«Хÿтлĕхре» те вăрă ĕçне пăрахман

Ульяновск облаçĕнчи Копыневка салинче çуралса ÿснĕ В. Васильев пирĕн районти Ермак ялĕнче федераллă шыравран хÿтлĕх тупнă иккен. Хĕрĕх урлă каçнă арçын чăваш çĕрĕ çинче те лăпкă пурăнман.

Акă иртнĕ кунсенче вăл Ярапайкассинчи магазин умĕнче ларакан Муркаш райповĕн машини äшĕнчен «Самсунг» телефон, 10 пачка пирус вăрланă. Тăватă кун маларах çак арçын Ермак ялĕнчи пĕр хăрарăмăнне, пĕрле эрех ĕçнĕ хыççăн, ылтăн çĕрĕпе хăлха çаккисем кăларса илет. Ĕçне тăвиччен вара хĕрарăма самаях чышкăлать.

Çапла вара арçыннăн «чаплă ĕçĕсен» ретне Уголовнă кодексри 158 тата 161 статьясем хушăнаççĕ. Мускав облаçĕнчи шалти ĕçсен управлениййĕнчен пытанса пурăннăскерĕн айăплавĕ те ĕçĕсене кура пулĕ.

Мĕн тумасть-ши эрех?

«Суррогатпа наркăмăшланнă, пĕвер токсинпа хавшанă» – çапла диагноз лартаççĕ Муркашри тĕп больницăна иртнĕ эрнере илсе пынă 30 çулхи хĕрарăма. Реанимаци уйрăмĕнче тăватă кун кĕрешнĕ-ха унăн пурнăçĕшĕн, анчах спиртлă шĕвек вăйлăрах пулнă: леш тĕнчене äсатать вăл хĕрарăма.

Çакнашкал тĕслĕх пĕрре кăна мар. Вĕсем çинчен вара черккене алла тытиччен аса илмелле, больницăна лекиччен. Спирт пур шĕвек пуçпа кăштах та пулин шутлаканнисене мар, кĕленчене ытамласа тытакансене юрататăçке. Ватă-и, çамрăк-и – вăл пурне те «çĕнтерме» пултарать.

Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.

Спорт хыпарĕсем

Физкультурниксен кунне халалласа

Августăн 7-мĕшĕнче «Сывлăх» ФСК-ра спорт уявĕ иртет. Унта хутшăнма районти ĕç коллективĕсене пурне те йыхравлаççĕ. 15 çынран тăракан команда тĕрлĕ енлĕ ăмăртусене хутшăнать: сĕтел çи теннисĕ, шывра ишесси (эстафета), шашкăлла тата шахматла вылясси, хаваслă стартсем, «баскетстрит» тата «ролло-кросс». Ишсе ăмăртакансен хăйсемпе пĕрле купальник, пуçа тăхăнмалли калпак, сланцы, ал шăлли пулмалла. Спорт уявĕ 10 сехетре пуçланать.

Августăн 8-мĕшĕнче Ярапайкассине Физкультурниксен кунне халаллана футбол суперкубокне курма васкăр. Стадионта Мăн Сĕнтĕрĕн тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн командисем вăй виçĕç. Вăйă 19 сехетре пуçланать.

www.yandex.ru

Прогноз погоды с 1 по 6 августа

Сб. 01	Вс. 02	Пн. 03	Вт. 04	Ср. 05	Чт. 06	Пт. 07
Переменная облачность	Переменная облачность	Переменная облачность	Переменная облачность	Переменная облачность, небольшой дождь	Переменная облачность	Переменная облачность, небольшой дождь
+ 24 +15	+25 +17	+25 +16	+24 +16	+23 +12	+16 +8	+12 +10

Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсемпе такасем туянатăп. Тел.: 8-903-063-07-57.

Продаю сено в рулонах. Тел.: 8-960-300-64-25:

Требуется бухгалтер с опытом работы. Тел.: 8-903-066-20-73.

Пĕлтерÿсем. Объявления

АКАДЕМИЯ РЕМОНТА
самые тихие, теплые и любимые ОКНА и ДВЕРИ
ОКНА деревянные и пластиковые
ДВЕРИ межкомнатные и металлические
СКИДКИ до 30%
РАССРОЧКА 0%
КРЕДИТ
Банк «Такой-то»
РОЛЬСТАВНИ
Выезд мастера и консультация специалистов – БЕСПЛАТНО
Натяжные ПОТОЛКИ
Расчет и заключение договоров НА ДОМУ
Кованные ИЗДЕЛИЯ (решетки)
8-927-669-80-60 29-80-60
с. Моргауши, ул. Мира, 9 А (здание редакции), 2 этаж.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-9.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.

Реализуем товарный бетон, строительный раствор, фундаментные блоки и колодезные кольца. Предлагаем услуги по доставке и разгрузке (манипулятор). Тел.: 8-908-0-30-333. 2-4.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер. Оптовикам скидка. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-6.

Продаю керамзитобетонные блоки 20х20х40 см., керамзит, гравмассу, песок с доставкой. Тел.: 8-902-327-66-95, 67-66-95. 3-5.

Военный билет № АЕ 1568859, выданный 26. 05. 2006г. ВК Моргаушского района имя Ястребова Алексея Александровича, считать недействительным.

Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 11-40.

ВНИМАНИЕ – АКЦИЯ!
Только до 31 августа 2009 года в честь 50-летнего юбилея и Дня строителя ЗАО «МСО «Моргаушская» проводит расширенную продажу квартир по выгодным ценам. Обращаться по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 9 «а» (здание редакции, 2-ой этаж. Контактные телефоны: 69-7-23; 671-999 (сот).

Участница долевой собственности **Герасимова Зоя Павловна, 18.01.1952 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, деревня Идагачкасы, ул. Первомайская, дом 5** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 3,84 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Герасимовой Зое Павловне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Первомайская, дом 5.

Участник долевой собственности **Герасимов Андрей Федорович, 17.08.1975 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, деревня Идагачкасы, ул. Первомайская, дом 5** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ярабайкасинское, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301 площадью 1,28 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Герасимову Андрею Федоровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Идагачкасы, ул. Первомайская, дом 5.

Участница долевой собственности **Кольцова Евдокия Борисовна, 18.07.1969 года рождения, проживающая по адресу: Красноярский край, г. Норильск, пл. Металлургов, д. 17, кв. 96,** сообщает о намерении выдела земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Большесундырское, на территории землепользования ООО «Нива», участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:050801 площадью 2,44 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Большесундырского сельского поселения.
2. Доверенному лицу Мусаевой Светлане Викторовне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Большой Сундырь, ул. Садовая, д. 1 «а».

Участник долевой собственности **Миронов Геннадий Анатольевич, 27.06.1962 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, деревня Карманкасы, ул. Овражная, дом 5** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:281001:600 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Миронову Геннадию Анатольевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Овражная, дом 5.

Участница долевой собственности **Миронова Ирина Ивановна, 01.04.1928 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, деревня Карманкасы, ул. Овражная, дом 5** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:281001:599 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:
1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Мироновой Ирине Ивановне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Карманкасы, ул. Овражная, дом 5.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 31.07.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3765.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.